24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
НОЯБРЬ
5
ЮНКУН
261 (5976) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

„Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшма хамăрăн пĕтĕм вăя хурар! Тăшмана çĕмĕрсе тăкма халăхăн вăйĕсене хурар!“ (СТАЛИН)

(Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă тĕле ЦК ВКП(б) кăларнă лозунгсенчен)

Комсомолецсем, йĕлтĕр çине!

Совет çĕршывĕнче çурăнакан кашни çамрăк физкультурăпа, спортпа интереслемне тивĕçлĕ. Физкультура организацийĕсене пулăшса, унăн ретне ӳстĕрсе, çирĕплетсе пырасси, Хĕрлĕ Çар валли тĕреклĕ резерв хатĕрлесси—комсомолăн ĕçĕ пулса тăрать.

Халĕ, отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче, ВЛКСМ пуçламăш организацийĕсем, райкомсем физкультура ĕçне нихăçанхинчен те çӳле вырăна лартмалла.

Çамрăксен физкультура, спорт ĕçне хутшăнас кăмăлĕ пысăк. Комсомол организацийĕсем ку ĕçе пуçарса, тĕрĕс ертсе пыни кирлĕ.

Пирĕн çĕршывра уйрăмăнах йĕлтĕр спорчĕ хисеплĕ вырăнта тăрать. Юлашки çулсенче Чăваш республикинче те йĕлтĕр спорчĕ массăллă спорт пулса тăма пуçларĕ.

Иртнĕ хĕлле Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ кросс нихăçан йĕлтĕр çине тăрса курман нумай çамрăксене йĕлтĕрпе çӳреме, ăна юратма вĕрентрĕ. Вăл кроса пурĕ 36.362 çын хутшăннă. Вĕсенчен 30.001 çын ГТО комплексĕн нормисене панă.

Часах акă хĕл сывхарса çитет. Малтанхи юр ӳксенех çамрăксем йĕлтĕр çине тăрса çĕнĕ юра йĕрлеме тытăнăç. ВЛКСМ пуçламăш организацийĕсем, райкомсен çумĕнчи çарпа физкультура тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссийĕсем ялти çамрăк йĕлтĕрçĕсене йĕлтĕрпе çӳремелли техникăпа паллаштармалла. Физкультурăн хĕллехи сезонне хатĕрленнĕ май, халех йĕлтĕрпе çӳремелли техникăна вĕрентекенсем (тренерсем) хатĕрлеме тытăнмалла. Тренерсене пуринчен ытла ялсем валли хатĕрлес пулать.

Йĕлтĕрçем тата йĕлтĕрçĕсене кирлĕ костюмсем пулмасан, йĕлтĕр спортне малалла яма йывăр. Çавăнпа та спортинвентарьсем туянас ĕçе, пысăк ĕç вырăнне хуроса, халех пуçăнмалла.

Хăшпĕр йĕлтĕрçĕсем обществăсен йĕлтĕрĕсемпе ярăнасси çине шанасçĕ. Вĕсем вара пачах çителĕксĕр. Кашни йĕлтĕрçĕн хăйĕн йĕлтĕр пулмалла. Кашни комсомолец хăйне валли йĕлтĕр туянтăр. Май кунсенче ӳкçапа илме те юрать. Анчах кăçал ӳкçапа илесси çине çеç шанса тăни килĕшӳсĕр. Йĕлтĕрсене харпăрăй тума тăрăшмалла. Комсомол организацийĕсен комсомолецсемпе çамрăксен йĕлтĕрĕсене шута илсе тухмалла. Кашни комсомолецăн, кашни çамрăкăн хăйĕн йĕлтĕрĕ пулсан çеç лайăх йĕлтĕрçĕсем пулма та, йĕлтĕр спортне вăйлатмашкăн пулăшма та пулать.

Комсомолецсен, çамрăксен тĕреклĕ пулмалла, йĕлтĕрсемпе тем тĕрлĕ йывăр походсене кайма та хатĕрленмелле. Çавăнпа кăçал та, иртнĕ çулсенчи пекех, йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене туса ирттермелле. Тепĕр чухне хуларипе ялсенчи йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсене пĕрле туса ирттерсен те аван. Çапла туни хулари йĕлтĕрçĕсен паха опычĕсене ялти йĕлтĕрçĕсен хушшинче сарма май парать.

Йĕлтĕр спорчĕ тăван çĕршывăн обороннине тĕреклетессипе тачă çыхăнса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ комсомолецсем ку ĕçе пуçарса пыракансем пулмалла. Кашни учрежденире, предприятире, шкулта тата колхозра физкультурăпа спорт коллективĕсем, йĕлтĕрçĕсен кружокĕсем, секцийĕсем тума тăрăшмалла. Вара кашни комсомолец, кашни çамрăк йĕлтĕрпе çӳреме пĕлмелле тенĕн лозунга пурнăçлама пултаратăр.

Физкультура тата спорт ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе чи малтан комсомол активĕн пример кăтартса пымалла. Пĕрпĕр физкультура обществисен членне кĕрсе, тăтăшах ăмăртусене хутшăнса, физкультурăпа çителĕклĕ таран ĕçлемелле.

Тепĕр чухне руководительсем «вăхăт çук» теме пăхаççĕ. Ку ĕнтĕ комсомол активистне килĕшмест. Комсомол ĕçне организацилеме пĕлекен, дисциплинăллă руководитель физкультурăпа ĕçлеме вăхăт тупатех тата тупмалла та.

Спорт коллективĕсенче физкультурниксене воспитани парас тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕсем çумĕнчи физкультура комиссийĕсен обществăсене шулăпса ертсе пымалла.

Физкультурăн хĕллехи сезонне кĕтсе илнĕ май, комсомол организацийĕсен йĕлтĕрçем, костюмсем хатĕрлес пулать. Йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентекенсене уйăрса хурас пулать. Кашни комсомолецăн, кашни çамрăкăн, физкультурникăн хăйне валли спорт инвентарĕ пултăр.

Комсомолецсемпе çамрăксем, çирĕп сывлăхлă пулма вĕренĕр, тăван çĕршывăн çирĕп сывлăхлă, тĕреклĕ патриочĕсем пулма тăрăшăр! Çĕнĕ юр ӳкнĕ хыççăнах йĕлтĕр çине тăрăр!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçусем туса пынă. Фронтăн Крым тата Калинин участокĕсенче уйрăмăнах хаяр çапăçусем пынă.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче нимĕçсенне 13 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен икĕ самолетне персе антарнă.

* * *

Хĕвеланăç тата Кăнтăр фрончĕсенче çапăçакан пирĕн авиачăсем нимĕçсен фашистла войскисене пысăк çухату кӳнĕ.

Тăшмансем çине бомбăсем ăнăçлăн пăрахса пирĕн летчиксем ноябрĕн 2-мĕшĕнче нимĕçсен 30 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 280 автомашинине, темиçе бронемашинине тата полевой орудисене, нумай мотоциклсене, боеприпассем тиенĕ лавсене 100 ытла, снарядсем тиенĕ 6 вагона пĕтерсе тăкнă, тăшманăн пехотине икĕ батальон ытла сапаласа ярса пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче ноябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн артиллери тăшманăн аэродромĕ çине ăнăçлăн персе тăнă. Артиллерирен пенипе нимĕçсен 19 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 9 самолетне сиенленĕ.

* * *

Оккупациленĕ районсенче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем мирлĕ халăха халĕ те çаратаççĕ тата вĕлерессĕç. Акимовка ялне тытса илнĕ хыççăн нимĕçсем малтанхи куннех Николай Михайлова, Евсей Ушакова, унăн 12 çулхи хĕрне тата Бурцев инвалида персе вĕлернĕ. Темиçе кун иртсен оккупантсем колхозниксен пысăк ушкăнне перçе вĕлернĕ. Çав ушкăнра 70 çулхи стариксем Яков Романенкопа Прохор Торташев, 60 çулхи Александра Козалева, Анна Мускова тата ытти нумай хĕрарăмсем ăнăçлăн ĕçлесе пыраççĕ. Паровой турбинăсен машинисчĕсем пулса вăрçăччен пĕр хĕрарăм та ĕçлемен. Çĕнĕ работницăсем Ермакова, Грохотова тата ытти те çак ĕçе лайăх вĕренсе çитнĕ тата машинистсен обязанноçĕсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Ĕнер кăна килхуçи хĕрарăмĕ пулнă вуншар хĕрарăмсем халĕ сменăра икшер норма тата унтан та ытла тултарса пыраççĕ.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç мĕнпур фронтсенче çапăçусем туса тынă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен Гончаров юлташăн часĕсем пĕр кун хушши пынă çапăçусенче немĕçсен 20 танкне тата тăшман пехотине 3 батальон ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Карели фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр часть противникăн тылне кĕрсе кайнă та, белофинсен наступлени тăвакан часĕсене пырса çапнă. Кĕске çапăçура противник пехотине 2 рота ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай турттарса илнĕ, вĕсем хушшинче темиçе оруди, 4 раци, боеприпассем тиенĕ 15 лав, 50 велосипед тата темиçе грузовик пур.

* * *

Хăйсем тытса илнĕ районсенче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем халăха тискер-кайăкла асаплантараççĕ. Смоленск облаçĕнчи Теренино ялĕнче нимĕç офицерĕ мĕнпур хресченсене пĕр çĕре пухнă та, кашни кил Германи çарĕ валли пĕр палла виçе таран продовольстви памалла, тесе пĕлтернĕ. Хресченсем офицера: кунта пулнă фашистла отряд пирĕн мĕнпур продуктсене туртса илчĕ, тесе каланă. Çакăн хыççăн нимĕçсем пухăва пынă хресченсем хушшинчен тăватă старике суйласа илнĕ те, вĕсене юпасем çумне çыхса лартса, ял халăхĕ умĕнчех вут-кăварпа асаплантарма тата тесаксемпе чикме пуçланă. Асаплантарнине тӳсеймесĕр тепĕр темиçе сехетрен тăватă старикĕ те вилнĕ.

Çав облаçри Березевка ялĕнче нимĕç салтакĕсем мĕнпур çуртсене çаратнă, та икĕ çулхи хĕрне Шурăна вĕлерсе хăварнă. Братолюбовка ялĕнче нимĕçсемпе румынсем çаратмашкăн килĕренех ухтарса çӳреççĕ.

* * *

Нимĕç фашисчĕсем финн халăхне çаратни тата унран мăшкăллани финн рабочийĕсене, служащийĕсене тата хресченĕсене хытăрах та хытăрах тарăхтарать. Нимĕçсене курайман пирки тепĕр чухне ӳççăнах выступленисем пулса иртреççĕ. Тыткăна лекнĕ финн салтакĕсем пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Хельсинкире нимĕçсемпе финсем хушшинче хĕпăшалла тытăçу пулса иртнĕ, çавăн чухне нимĕçсен икĕ салтакне вĕлернĕ пулнă.

«Нимĕçсене Финляндирен хăваласа кăларса ăма тахçанах вăхăт ĕнтĕ. Вĕсем пирĕн патăрта килти пекех пуç пуласшăн. Хăваласа кăларса ямасан вĕсем хăйсем нихăçан та тухса каяс çук»—тенине финн салтакĕсенчен час та часах илтме пулать.

* * *

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче заводсенче, фабрикăсенче, шахтăсенче тата чугунçулсем çинче хăйсен Хĕрлĕ Çара кайнă упăшкисемпе тăванĕсем вырăнĕнче ĕçлеме вунтшар пин хĕрарăмсем пычĕç. Хăйсемшĕн çĕнĕ шутланакан профессисене хĕрарăмсем ăнăçлăн вĕренсе алла илеççĕ.

Кузнецкри металлурги комбиначĕн коллективне çĕршер килхуçи хĕрарăмсем хутшăннă. Хĕрарăмсем электрокрансемпе управлени посчĕсенче машинистсем пулса ĕçлеме, паровоз машинистчĕсен помощникĕсем, шоферсемпе электриксем тата ыттисем пулса ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Управлени посчĕсенче машинистсем пулса ĕлĕк пуринчен ытларах арçынсем ĕçленĕ. Халĕ çак ĕçре вуншар хĕрарăмсем—Портнягина, Захарова, Мочачина, Никитина тата ытти нумай хĕрарăмсем ăнăçлăн ĕçлесе пыраççĕ. Паровой турбинăсен машинисчĕсем пулса вăрçăччен пĕр хĕрарăм та ĕçлемен. Çĕнĕ работницăсем Ермакова, Грохотова тата ыттисем те çак ĕçе лайăх вĕренсе çитнĕ тата машинистсен обязанноçĕсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Ĕнер кăна килхуçи хĕрарăмĕ пулнă вуншар хĕрарăмсем халĕ сменăра икшер норма тата унтан та ытла тултарса пыраççĕ.

ВКП(б) Мускав хулинчи райком секретарĕсен канашлăвĕ

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче ВКП(б) Мускав хулинчи райком секретарĕсен, парти райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен тата докладчиксен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Октябрьти Социализмлă Аслă революци 24 çул тултарни çинчен ВКП(б) Центральный Комитечĕн пропагандăпа агитаци управленин начальникĕ Александров юлташ доклад туса панă.

Канашлу вĕçĕнче ВКП(б) Мускав комитечĕн секретарĕ Щербаков юлташ тухса каланă. Щербаков юлташ хăйĕн сăмахĕнче Октябрьти Социализмлă революци уявĕн кăçалхи уйрăмлăхĕсем çинче тата партин Мускав организацин черетлĕ задачисем çинче чарăнса тăнă. (ТАСС).

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕН КИЛНĔ ЮЛАШКИ ХЫПАРСЕМ

Тула хулишĕн пыракан çапăçусем

(„Правда“ хаçатăн спецкорĕсем)

ТУЛА, ноябрĕн 2-мĕш. (Телефон тăрăх). Ноябрĕн 1-мĕшпе 2-мĕш хушшинче çĕрле вăхăт чылаях лăпкă иртрĕ. Оборонăн малти хĕррисен хăшпĕр вырăнĕсенче кăна фашистла автоматчиксен пĕчĕк ушкăнĕсем персе тăма хăтланнă. Ноябрĕн 2-мĕшĕнче ирхине нимĕçсем минометсенчен пеме пуçланă. Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче тивĕçлĕ отпор туяннă хыççăн фашистсем паян атакăна кĕресшĕн мар, хулана танксем ямаççĕ. Тула таврашĕ танксен ванчăкĕсемпе тулса ларнă. Çакă вăл майор Зубковăн, майор Гордиенкон тата командир Фокановăн истребительнăй часĕсен ĕçĕн результачĕсем.

Артиллери канонадин сасăи кунĕпех илтĕнсе тăнă. Пирĕн артиллеристсем хулан кăнтăр енчи вырăнĕсенче пухăнса тăнă противник çине персе тăраççĕ. Наблюдательсемпе разведка артиллеристсем тĕл персе тивретнипе тăшман танкĕсем, минометсен батарейисем, бронемашинисем сывлăша сирпĕнсе кайни çинчен пĕлтереççĕ.

Тула хули геройла хӳтĕленет. Боецсемпе командирсем тата хĕçпăшаллапа ĕççыннисем Тула хулине фашистсене кĕртес мар, тесе çапăçаççĕ.

Тула—фронт. Çакă вăл кашни урамрах, кашни кĕтесрех сисĕнет. Хула баррикадăсемпе çирĕпленнĕ. Хула варринче çĕр ĕçĕсем пыраççĕ, шăтăксемпе канавсем алтаççĕ, çĕнĕрен баррикадăсем тăваççĕ. Оборона укрепленийĕсене тума рабочисем, килхуçи хĕрарăмсем, стариксем тухнă.

Паян тăшман пытанса, лăпкăн тăнă. Вăл хăйĕн суранĕсене сиплет, хула центрне кĕрсе ăна йышăнас тесе çĕнĕрен вăй пухать. Хĕрлĕ Çар часĕсем тата рабочисен отрячĕсем пулас çĕнĕ атакăсене сирсе пăрахма хатĕрленеççĕ.

Хулара пурнăç хĕрсе пырать. Промышленноçлă предприятисем, телефонсем, радио тата сыхăну ĕçлеççĕ. Тула хулинче пурăнакансем Ленинградран панă радиопередачăна пысăк хаваслăхпа итленĕ. Ленин хулине геройла хӳтĕлесе тăни çинчен каласа панисем Тула хулинче пурăнакансен вăй-хăватне çĕклентереççĕ тата винтовкăна алăра тата çирĕпрех тытма хавхалантараççĕ.

Кун вĕçленсе килет. Тула хулине тăттăм сăнĕ çапать. Фронтри шиклĕ çĕр. Маврин командирăн хула тулашĕнче майлаштарса лартнă артиллери батарейисем пĕр çĕре пухăннă противник çине персе тăраççĕ.

М. СИВОЛОБОВ, Л. МИТНИЦКИЙ.

Фашистсен атакине сирсе пăрахнă

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 2-мĕш. (**«Правда» çар корр.**). Котов командирăн боецĕсем хӳтĕлесе тăракан участокра фашистсем наступление куçнă. Нимĕçсен суйласа илнĕ часем, çав шутрах «СС»-дер фюрер» тенĕн полк та атакăна кĕнĕ. Котов боецĕсем тăшмана хăюллăн кĕтсе илнĕ, ăна тимлĕн хирĕç тăнă тата исходнăй позицине чактарнă. Икĕ кун хушшинчи çапăçура пирĕн подразделенисем фашистсене 700 çын ытла вĕлернĕ, противникăнне икĕ танк тата пĕр самолет пĕтерсе тăкнă, противотанковăй 4 тупă, пулеметсем, автоматсем, винтовкăсем, противогазсем тытса илнĕ.

Хаяр тытăçусенче боецсемпе командирсем хăйсен хăюлăхне тата тимĕр пек çирĕплĕхне кăтартса пачĕç. Кĕçĕн лейтенант Илья Иванович Рештаков К. ялĕнче танксен тата противник пехотин вунă атакине сире-сире пăрахнă. Хăюллă контратакăсем туса Рештаков юлташ тăшмана сисĕнмеллех çухату кӳртернĕ: çав участокра нимĕçсен темиçе çĕршер салтакĕсем вилсе тата аманса юлнă. Çапăçу хыççăн Рештаков юлташ коммунистла партин ретне кĕнĕ.

Çапăçу вăхăтĕнче пулемет ротин командирĕ стройран тухнă. Командованине старший сержант-коммунист Антон Сокол хăй çине илнĕ. Хĕрсе çапăçнă вăхăтра чи кирлĕ позицине вырнаçтарса лартнă пулемет ĕçлеме чарăннă. Сокол юлташ противник персе тăнине пăхмасăрах пулемета çусанă, унтан персе тăнă. Ăна амантнă, анчах вăл командир приказ панă хыççăн тин çапăçу хирĕнчен тухнă.

Комсомолец лейтенант Григорий Кузнецов хăйĕн пулемет расчечĕпе гитлерла бандитсене питех те тĕл тивретсе тăнă. Кузнецов юлташ нимĕçсене 200 çын ытла пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хыççăн вăл хăйне парти ретне илме ыйтса заявлени панă, ăна çийĕнчех ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ.

Ал. ИСБАХ.

Тăшман пысăк çухату тӳсет

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Фронтăн кирлĕ участокĕсенче пирĕн чассем кунĕпех противникăн разведка тăвакан танк тата пехота групписемпе çапăçнă. Волоколамск районĕнче тăшман пехоти темисе хутчен те наступлени тунă. Рокоссовский командирăн часĕсем тăшман хĕснине тимлĕн сире-сире пăрахнă.

Можайск енче тăшман пирĕн оборонăна кĕрсе кайма çине тăрсах хăтланса пăхнă. Говоров командирăн часĕсем мĕнле пулсан та Т., Д. тата Л. пунктсене йышăнма тăрăпакан противник атакисене хăюллăн сире-сире тăнă. Пирĕн чассем немĕçсен авангардне тимлĕн хирĕç тăнă. Çапăçу çаплах пырать. Тăшман пысăк çухату тӳсет.

К. пункт сывăхĕнчи автотрасса çинче танксем çапăçăвĕ пулса иртнĕ. Немĕçсен, пысăк çухату тӳссе, каялла чакмалла пулнă.

Н. хула районĕнче вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Тăшман темиçе хутчен те Нара юханшывĕ урлă каçма хăтланнă, анчах совет войскисем çине тăнине пула тăшман капшнинчех каялла чакнă. Н. хулашăн пыракан çапăçура политрук заместителĕ Козлов юлташ ертсе пыракан разведчиксен отрячĕ уйрăмах палăрнă. Унăн отрячĕ Н. хули патне ăшмалли çулсем çине пĕр çĕре пухăнса тăнă тăшман часĕсем вырнаçнă çĕре шалалла кĕнĕ. Çав хула патне пыракан çул çинче отряд немĕçсен пехотин икĕ батальонне яхăн тĕл пулнă. Козлов юлташ засада тума, тăшмана çывăхах яма тата ăна пулеметсенчен персе пĕтерсе тăкма решени йышăннă. Пĕлсе маскировка туса, пирĕн разведчиксем çул тăрăх выртса тухнă. Противник вĕсем патне 100 метра çывхарсан, сывлăшра хĕрлĕ çăлтăрла санитари самолечĕ курăннă. Фашистсем пĕр çĕре пухăнса, вĕçекен карап çине пăхма тытăннă. Тăшмана пырса çапма çаван пек лайăх вăхăта урăх кĕтмелли пулман. «Огонь!»,—тесе команда панă Козлов. Фашистсем хушшинче паника пуçланнă. Пирĕн пулеметчиксем персе тăнинчен çав батальонсен составне кĕрекен немĕçсенчен питех те сахалăшĕ çăлăнма пултарнă. Çул тата ун таврашĕнчи участок часах немĕç салтакĕсен тата офицерĕсен виллисемпе тулса ларнă. 300 гитлеровец ытла Н. хули патĕнче хăйсене валли вилĕм тупрĕç.

Лынкин, Молчалин, Лукишкин пулеметчиксем хăюллăн çапăçнă.

Голубов командирăн артиллеристчĕсем иртнĕ талăк хушшинче артиллери тата миномет точкисене пĕтерсе тăкас шутпа тăшман позицийĕсем çине вăхăтран вăхăт персе тăнă. С. районĕнче пирĕн войскăсем В. пункчĕ патĕнче чылай ăнăçлă контратакăсем тунă. Немĕçсем пысăк çухату тӳснĕ. Пирĕн войскăсем малалла кайнă тата çĕнĕ боевой рубеж йышăннă.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн фронтри сывлăш-çар вăйĕсем, çанталăк условийĕсем начар пулнине пăхмасăрах, тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисене атакăланă тата вĕсен автобронетанковăй часĕсене штурмланă. Саўна пула немĕçсенне 12 танк, 30 автомашина, зенитнăй виçĕ установкăна пĕтерсе тăкнă, тăшман пехотине пысăк çухату тӳстернĕ.

Донбасшăн пыракан çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, ноябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Донбасс вăрçă вутĕнче пурăнать, тăшман тапăнса пынине хирĕç хаярăн тăрать. Çак ӳкĕлми пуянлăх вырăн, çĕркăмăр, металл, химия вучахĕ пире темрен те хаклине тăшман лайăх пĕлсе тăрать. Урса кайнă фашистсен ордисем Донбаса кĕрсе каяссăн вĕчĕхеççĕ, вĕсем горняксене чурасем тăвассăн. Анчах немĕçсене пур тĕлте те оборонăн вăйлă чукмарĕ кĕтсе тăрать. Вăхăтлăха тытса илнĕ кашни ялшăн, кашни шахтăшăн, кашни заводшăн гитлеровецсем хăйсен хура юнне аслă çырмари шыв пек юхтараççĕ. Тăшман ăçта та пулин кĕрсе кайнă пулсан, унта вăл сӳнтернĕ домнăсем, сывлăша сиктернĕ цехсем, шыв айне тунă шахтăсем кăна тĕл пулать. Вăхăтлăх çитĕнӳсем çăмăл лекмеççĕ тăшмана. Хĕрлĕ Çар часĕсемпе пĕр пулса кĕрешме Донбасри шахтерсем, металлургсем, химиксем, чугунçул çинче ĕçлекенсем çĕкленчĕç.

Хăйсен упăшкисене, ашшĕсемпе ывăлĕсене фронта ăсатнă хыççăн, çул çине хĕрарăмсем, ачасемпе стариксем тухрĕç. Хĕçпăшал, боеприпассем, продовольстви тиенĕ машинăсем фронта каякан çулсем çине вĕсем вĕт чул, хăйăр сараççĕ. Аçта та пулин вĕт чул çитмесен, вĕсем хăйсен килĕнчи чул хӳмесене ватаççĕ. Кĕркуннехи çулсене çирĕплетес ĕç хĕрсе пырать. Кĕреçесем, киркăсем йăтса, çынсем хире окопсем, танксене картламалли шăтăксем алтма тухаççĕ. Сталино хулине пымалли вырăнсенче немĕçсем темиçе пин çын çухатрĕç, вĕсенчен нумайăшĕ вилĕ, ытти сурансем Урамри çапăçусенче фашистсем пайтах пĕтрĕç. Кунта Донбасс горнякĕсем, металлургĕсем çапăçрĕç. Сталин ячĕпе тăракан заводри рабочисем хăйсемех броня шăратрĕç, хăйсемех броневиксене хĕçпăшаллантарчĕç, хăйсемех çав броневиксемпе çапăçусене кĕрсе кайрĕç. Рабочи поселок Зуевка виçĕ хутчен алăран алла куçрĕ. Н-ски кавалери полкĕпе пĕрле горняксем кунта немĕçсен горнострелковăй дивизин икĕ полкне çапса аркатрĕç. Снежная районĕнче горняксем немĕçсен пехотине пĕр батальон ытла тата автоматчиксен пĕр ротине пĕтерсе тăкнă. Тăшмана пĕтĕм чунтан курайманни отечественнăй аслă вăрçăра çĕнĕрен тата çĕршер геройсем çуратса кăларать.

Ленин ячĕпе тăракан шахтăри смена мастерĕ Дмитрий Мирошниченко минометчиксен взвочĕн командир помощникĕ пулса тăчĕ. Унпа юнашар унăн шăллĕ Николай кĕрешет. Пĕр тăван Мирошниченкосен миномет расчечĕ противникăнне пĕр теçетке кăна мар огневой точкăсем пĕтерсе тăкнă. Вĕсем тĕл пенĕ вутран фашистсем çĕр çын ытла пĕтнĕ. Врубовой машинист Иван Чумак—халĕ шахтер часĕсенчен пĕринче рядовой стрелок шутланать. Вăл пуçаруллă та хăюллă разведчик пулнипе мухтава тухнă, чапĕ йĕриташах сарăлнă. Нумаях та пулмасть вăл противник вырнаçса тăнă çĕре шала кĕрсе кайнă та унăн огневой точкисем хăш тĕлте тăнине палăртса тухнă. Каялла тавăрăннă чух вăл сурансланнă красноармееца йăтса тухнă. Хăйĕн часне разведчик Чумак тăшманран туртса илнĕ икĕ миномета тата нумай минăсене 4 лаша çине тиесе тавăрăннă.

Донбасшăн çапăçусем халĕ те пыраççĕ.

Противникăн наступленине чарса лартнă

ВОЛОКОЛАМСК ЕНĔ, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Немĕçсен 35-мĕш мотомеханизированнăй дивизийĕн часĕсем Мускав çине тӳрех наступлени тума тытăнса, халăх пурăнакан С. пункчĕ çине вăйлă наступлени пуçласа янă. Рокоссовский командирăн боецĕсем, лайăх рубежсем йышăнса, противник наступленине чарса тăрассине хăйсем çине илнĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕсем немĕçсен пехоти нумай хутчен тунă атакăсене сире-сире янă, фронтăн нумай участокĕсенче контрнаступлени тума пуçланă.

Хопров юлташ командир пулса ертсе пыракан стрелковăй часть противник танкĕсен подразделенин атакине сирсе пăрахса хăй малалла куçнă, стратеги тĕлĕшпе кирлĕ вырăна йышăнса илнĕ. Пĕрремĕш батальон хăюллăн пырса çапса противника пысăк çухату кӳнĕ. Икĕ сехет хушши пынă тытăçура немĕçсен 35-мĕш дивизин пехотнăй полкĕсенчен пĕринче 300 çынна çити вилнĕ тата аманнă.

Немĕçсен наступленине хирĕç çапăçса пирĕн танксен Н-ски часĕ противникăн территорийĕ ăшне кĕрсе кайнă. Çавна пула немĕçсен 106-мĕш дивизин икĕ полкĕн икĕ километр хушши каялла чакма тивнĕ.

Октябрĕн 31-мĕшĕнче каç пулас умĕн Волоколамск енче немĕçсен наступленине тытса чарнă пулнă. Косаков юлташăн артиллеристчĕсем персе фашистсен 25 танкне пĕтерсе тăкнă. Фашистсен командованийĕ фронтăн нумай участокĕсенче хăйĕн пехотнăй часĕсене каялла илсе оборонăна куçма йышăннă. Пирĕн пĕр стрелковăй чăсе хамăран тĕп вăйсенчен татса илме хăтланакан тăшманăн войскисем çине Доваторов юлташăн кавалери группи вăйлăн пырса çапнă.

Командир Памфилов çапăçакан районра, ăнăçлă разведка тунине пула, Гумеров юлташ комиссар пулса ертсе пыракан артиллери часĕ тăшманăн боеприпассем турттарса пыракан автомашинăсен колоннине пĕтерсе тăкнă, немĕçсен Çурçĕр-Хĕвеланăç енчен илсе килнĕ пехотнăй полкĕн икĕ батальонне сапаласа янă.

Рокоссовский юлташăн часĕсем Волоколамск енче немĕçсен наступленине чарса лартнă, лайăх рубежсене йышăнса, оборонăна çирĕплетнĕ

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Ăмăртура малта пыракансем

ВĂРМАР. **(Хамăр корр.).** Районри предприятисемпе колхозсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Поселокри Осипенко ячĕпе тăракан çĕвĕ артелĕ сентябрь уйăхĕн планне 112 процент тултарнă. Артель октябрьте те ăнăçлăн ĕçлесе пычĕ, çĕршыв валли кушран куш ытларах продукци парать. Тухăçлă ĕçлеме пĕр сменăран икĕ смена çине кусни чылай пулăшать. Уйрăм çĕвĕçсем смена хыççăн юлса ĕçлеççĕ. Комсомолка Ольга Кузьмина юлташ вăя шеллемесĕр ĕçлет, специальнăй заказсене пурнăçланă чух нормăна 145—150 процент тултарса пырать. Анна Веселова, Анна Степанова, Мария Васильева тата ытти çĕвĕçсем те унран юлмаççĕ: вĕсем задание 120 процентран кая мар тултараççĕ.

Артель аслă уяв тĕлне çулталăкри плана 95 процент тултарма обязательство илнĕ. Паллах, артель хăйĕн çине илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртет.

Вăрмар станцинче ĕçлекенсем те уява чыслă ĕçпе паллă тума хатĕрленеççĕ. А. Ф. Тимофеев, И. Г. Герасимов юлташсем станцăри дежурнăйсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем яланах пĕр кăлтăксăр ĕçлеççĕ. П. Бутаев, П. Кириллов тата А. Павлов стрелочниксем поездсене тĕрĕç йышăнса илсе вăхăтра ăсатаççĕ. Таваресене сыхлакан А. Максимов юлташ ватă ĕнтĕ, чугунçул çинче вăл чылайранпа ĕçлет, халăх пурлăхне тĕплĕн сыхлать. Вăл нихăçан та пĕр япала çухатмасть.

Станци начальникĕ Орлов юлташ пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтне майлă йĕркелесе, унăн приказĕсем — кĕске те выраннă.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту тивлечĕсенчен пĕри — стахановецсемпе двухсотниксен йышĕ ӳссе пынă. Ку ĕç уйрăмăнах район центрĕнчи Спортинвентарь фабрикинче палăрать. Юлашки вăхăтра кунта нормăна иртерсе тултарса ĕçлекенсен хисепĕ 150 çынна çитнĕ. Хăшпĕр рабочисем сменăри задание 3—4 хут тултараççĕ. Полировщица София Иванова, София Терентьева, плотник Геннадий Федоров юлташсем нормăна 2,5—3,5 хут тултарнипе пĕрлех лайăх пахалăхлă продукци параççĕ.

Ăмăртура Киввĕ Вăрмарти «Большевик», Çĕнĕ Вĕренерти «Хĕрлĕ Мăрат» колхозсем малта пыраççĕ. Вĕсем паянхи куна тырпул, çĕрулми, уксă-тенкĕ, аш-какай, сĕт-çу парас плансене тултарнă. «Хĕрлĕ Мăрат» колхоз аван çапас ĕçе те вĕçленĕ. «Большевик» колхоз çурри ытларах çапнă. Халхи вăхăтра икĕ колхозĕ те çине тăрсах купăста типĕтеççĕ. Уяв тĕлне пахча-çимĕç обязательствине тултарма тăрăшаççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕлессишĕн Ыхра-Сырмари «Делегатка», Орнарти «Победитель» колхозсем пĕрремпе социализмлă ăмăртăва тухнă. Çавăн хыççăн «Делегатка» колхозра ĕç тухăçлăхĕ палăрмаллах ӳснĕ. Ф. Максимов, А. Степанов, Н. Меркурьев, А. Тихонов колхозниксем кĕлте кĕртес ĕçре нормăна пăхнинчен икĕ-виçĕ хут хăвăртрах ĕçленĕ. **Т. ИВАНОВ.**

Артель çĕнĕлле ĕçлеме пуçларĕ

Сюктерти промысла артелĕ Шупашкарти «Красный мебельщик» артельпе ăмăртса ĕçлет. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура Сюктерти промысла артелĕн цехĕсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса пачĕç. Вĕсем октябрь уйăхĕнче çĕнĕ цехсенче çĕнĕ продукцисем туса кăларассине вĕренсе çитсе, пысăк пахалăхлă продукци туса кăларма обязательство илнĕ. Ноябрĕн 1-мĕшне йĕлтĕрсем туса кăлармалли цеха ĕçе ярса, декабрь уйăхĕн пуçламĕшне оборонăлла заказа пĕтĕмпех пурнăçлама пулнă. Каткапичкĕ цехĕ октябрь уйăхĕн планне 226 процент тултарчĕ. Ку цехри рабочисем пурте двухсотниксем тăвакан цех та ноябрĕн 1-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар валли икĕ тĕрлĕ продукци туса кăларас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнчĕ.

Çĕнĕрен организациленĕ цехсем валли типĕтнĕ йывăç нумай кирлĕ. Çавăнпа та нумай хисеппе йывăç типĕтесе кăларакан цех кирлĕ пулнă. Çав цеха хăвăртрах тума рабочисем кăмăллă кунсенче те ĕçлесе çĕнĕ цеха туса пĕтерсе срокчен 5 кун малтарах ĕçе янă. Халĕ çурса кăларнă пиншер болванкăсене çĕнĕ цехра типĕтеççĕ. Болванкăсене типĕтнĕ çĕртте килхуçи хĕрарăмĕсем те нумай пулăшаççĕ. Вĕсем йывăç материалсене типĕтме купалаççĕ, типсен каялла кăлараççĕ. Килхуçи хĕрарăмĕсен пуçарулăхĕпе хастарлăхне кура хĕрачасем икшер профессипе ĕçлеме пуçларĕç. Сăмахран, О. Данилова юлташ плановик тата биржа заведующин ĕçĕсене туса пырать.

Ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн мĕнпур вăйпа кĕрешсе ĕçленипе артель кĕске вăхăтрах оборона заказне ăнăçлă пурнăçлакан предприяти пулса тăчĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

Промартельсем Октябрь уявĕ умĕн

ИШЛЕЙ. Районри промысла артелĕсем Октябрьти Социализмлă аслă революци 24 çул тултарнине ĕçри çĕнĕ ситĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Промартельсенчен чылайăшĕ, партин XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçласа пырса, хăйсен 9 уйăхри планне ăнăçлăн тултарчĕç. Пуринчен ытла Чăваштарпромсоюз системине кĕрекен промартельсем малта пыраççĕ. Çак системăна кĕрекен 14 артельрен 10-мĕ хăйсен планĕсене иртерсе тултарнă. Уйрăмăнах Катраçри, Тăрăнти тата Чурачăкри промартельсен членĕсем тимлĕн ĕçлеççĕ. 9 уйăхри плана, сăмахран, Катраçри артель— 174 процент. Тăрăнти—165 процент, Чурачăкри—166 процент тултарнă. Чăваштарпромсоюз системинчи артельсем пурĕ пĕрле, 9 уйăх хушшинче продукци туса кăларса плана 111,2 процент тултарчĕç.

Анчах Чăваштарпромсоюз системинче те япăх ĕçлекен артельсем пур-ха. Сăмахран, Мăн Мамăшри, Шетмĕпуçĕнчи, Ыхракассинчи тата Атăл-ялти промартельсем çулталăк тăршшĕпех ĕнтĕ, хăйсен планĕсене тултараймасăр, кая юлса пыраççĕ.

Чăвашкоопинсоюз, Чăвашдревпромсоюз тата Чăвашшвейпромсоюз системисене кĕрекен артельсем лайăх ĕçлеççĕ. Чăвашкоопинсоюз системине кĕрекен Шурчари артель 9 уйăхри плана 156 процент, Чаганарти артель 113 процент тултарнă.

Малта пыракан артельсем халĕ уявчен çулталăк планне тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

М—н.

Комсомолăн Шупашкарти активĕн пухăвĕ

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче комсомол активĕн хулари пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташ комсомол Чăваш обкомĕн виççĕмĕш пленум итогĕсем çинчен туса панă доклада сӳтсе-явăрĕ. Докладчик тата пренире тухса калакансем комсомолăн Шупашкар хулинчи уйрăм организацийĕсем Оборонăн Государственный Комитечĕ «ССР Союзĕнчи граждансене пурне те çар ĕçне вĕрентесси çинчен» йышăннă постановленине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынине палăртрĕç.

Ликероводочнăй заводри комсомолăн пуçламăш организацийĕ çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе аван ĕçлет. Кунта вуншар çын донор пулма çырăннă, хĕрачасенчен 13 çын санитари дружинин кружокĕнче вĕренеççĕ. 44 çын ПВХО нормисене панă. Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи комсомол организацинчи 16 çынран 4 çын ПВХО инструкторĕсем пулса ĕçлеççĕ, тăватă çын медсестрасен курсĕнче вĕренет.

Анчах, калас пулать, комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетесси çинчен нумай калаçаççĕ, çав вăхăтрах вĕсен конкретлă ĕçĕ курăнмасть. Вĕсем комсомолецсене çар ĕçне вĕрентессине ку вăхăтченех кирлĕ пек йĕркелемен. Комсомолăн Водосветри, çыхăну конторинчи организацийĕсенче çар ĕçне вĕренессине организацилес тĕлĕшпе ку вăхăтченех нимĕн те туман.

Уйрăм организацисем начар ĕçлени комсомол хула комитечĕ енчен тĕрĕслесе, ĕçре пулăшса пыманнинчен килнĕ. Комсомол горкомĕ çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе актив туса йĕркелеме пултарайман. Горком сумĕнчи çарпа физкультурăн яланлăх комиссийĕ ĕçлемест.

Комсомол активĕн пухăвĕ çамрăксем хушшинчи политикăлла-массăллă ĕç мĕнле тăни çинчен те чарăнса тăчĕ. Вăрçă кунĕсенче комсомолăн чылай организацийĕсем политикăлла-массăллă ĕçе чылай çĕнетсе урăхлатнă. Çав хушăрах уйрăм организацисем кивĕлле ĕçлеççĕ. Хăшпĕр организацисенче комсомолецсен пухăвĕсене вăхăтра иртермеççĕ, докладсемпе лекцисем пулмаççĕ, стена хаçачĕсем кăлармаççĕ. Çакнашкалах комсомол тата профсоюз организацийĕсем пысăк пулăшу парса тăраççĕ. Чугунçул станцисенче тата ытти çĕртте те пиншер колхозниксем воскресниксем туса ĕçлерĕç.

Хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе Алтышево разъездĕнчи коллектив кăтартуллăн ĕçлесе пычĕ. Разъезд начальникĕ коммунист Фролов юлташ ĕçре хăй лайăх тĕслĕхсем кăтартса пытăсене хавхалантарса пычĕ. Ĕç пĕтернĕ хыççăн, канмалли кунсенче шишсемпе алшăллисем пухăннă. Çавăн пекех Чаканар ялсоветĕнчи «Осоавиахим» колхоз членĕсем пурте тенĕ пекех Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем парас ĕçе хутшăннă.

Ăшă япаласем пухас ĕç уйрăмах Тивĕш ялсоветĕнче начарчĕ. Комисси председателĕ Сорокин юлташ (тулли-мар вăтам шкулăн директорĕ) тата пуçламăш парторганизацин секретарĕ В. Яртеев халĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă тумтирсем пани мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса паман. Тивĕш ялсоветĕнче ăшă япаласем пухас ĕçе вăйлатма кирлине парти райкомĕ уйрăмах асăрхаттарсан кăна Сорокинпа Яргеев юлташсем çак ĕçе çине тăрса туса пыма тытăнчĕç. Халĕ ăшă япаласем пухас ĕç унта та лайăхланчĕ.

Ф. САЗОНОВ.
ВКП(б) райком секретарĕ.

* * *

КУКЕÇ. Иккасси ялсоветне кĕрекен колхозсен членĕсем тăван çĕршыв оборонин фондне тĕштырăсем, заем облигацийĕсем хывăççĕ.

Çак куншенче ялсоветри колхозниксем Хĕрлĕ Çар валли пĕр тонна çĕрулми, 900 килограмм купăста, 175 килограмм аш-какай, 100 çăмарта, 40 литр сĕт, 4 килограмм çу пачĕç.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 300 мăшăр ăшă алшăш, 30 мăшăр çăматă, 300 мăшăр çăм чăлха, 120 чĕрĕ тир, 35 мулахай, 20 çăм кĕпе, 10 кĕрĕк тата ытти-сене те пухса, районри склада леçсе панă.

И. ВАСИЛЬЕВ.

* * *

Шупашкар хулинчи пристаньре ĕçлекен рабочисемпе служащисем Хĕрлĕ Çар боецĕсене Октябрь уявĕ ячĕпе парнесем илсе пама пурĕ 1.500 тенкĕ укçа пухрĕç.

Уйрăм рабочисемпе служащисем парнесем илмешкĕн 30—50-шар тенкĕ пачĕç. Сăмахран, таварсем йышăннă çĕртте ĕçлекен Иванов 50 тенкĕ, перевоз заведующийĕ Толмачев—50 тенкĕ, диспетчер Михайлова—30 тенкĕ, партин пуçламăш организацин секретарĕ Игумнов—30 тенкĕ, диспетчер Родинов—30 тенкĕ, бухгалтер Красильников—25 тенкĕ, караванщик Ищин—20 тенкĕ пачĕç.

Пухăннă укçапа тĕрлĕ япаласем илсе, вĕсене Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли фронта ячĕç.

Боецсем—оборона фондне

Н-ски чăсри коммунистсемпе комсомолецсем—Чăваш республикинчен килнĕ боецсем хăйсен пĕрле пулнă тухăвĕнче çĕршыв оборонин фондне заем облигацийĕсем пама пулчĕç. Çур сехет хушшинче заем облигацийĕсем 6000 тенкĕлĕх тата 6540 тенкĕ укçан пачĕç.

Коммунистсемпе партире тăван большевиксем хăйсем йышăннă резолюцире çапла çырчĕç:

«Пирĕн заемсем çĕршыв оборонине тĕреклетме кайччăр. Эпир тăван çĕршыв ыйтнине пурне те пама, тăшмана кирĕç юлашки тумлам юн юлмичен çапăçма хатĕр. Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисене пурне те фронта пулăшма, тăшмана çĕнтересшĕн алăсене канăç памасăр ĕçлеме чĕнетпĕр».

В. ЯСТРЕБОВ.
Действующи арми.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă тумтирсем

ВĂРМАР. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Хĕрлĕ Çар боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçре районри учительсем пример кăтартса пыраççĕ. Вĕсем фронта пулăшассишĕн ĕçхресченĕсем хушшинче агитацилеппе пĕрлех, хăйсем нумай япаласем параççĕ. Чупайри туллимар вăтам шкулăн директорĕ Т. Г. Больский юлташ пĕр мăшăр перчатка, пĕр килограмм çăм, мулаххай тата тир панă. Ана кура çак ĕçе ытти учительсем те активлăн хутшăннă. Вĕренӳ пайĕн заведующийĕ А. Н. Мясникова юлташ 4 япала, учительница Р. А. Алексеева юлташ 7 япала панă. Ку шкулти служащисем пурте Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем панă. Пысăк мар коллектив 4 çĕлĕк, 9 тир, 2,5 килограмм çăм, 4 алшăлли, 5 мăшăр перчатка, простынясем, минтер пичĕсем т. ыт. пухса панă.

Çак чыслă ĕçе Тупахри туллимар вăтам шкул коллективĕ те активлăн хутшăннă. Шкулти 12 служащирен пурте 2—3-шер япала панă. Октябрĕн 25-мĕш тĕлне 7 мулаххай, 6 тир, 11 алшăлли, 4 минтер пичĕ, 4 тăла, 5 мăшăр алшăш, носкисем, темиçе килограмм çăм пухнă. Халĕ учительсем ăшă тумтир пухас тĕлĕшпе колхозниксем хушшинче ĕçлеççĕ.

Шкул директорĕ Миронов юлташ — районри чи лайăх агитатор шутланать. Вăл хăйне çирĕплетсе панă бригадăра агитаци ĕçне пĕр сиктермесĕр туса пырать. Унсăр пуçне вăл — çар ĕçне вĕренекенсен ротин политрукĕ. Ăшă тумтир пухассине çар ĕçне вĕренекенсем хушшинче те организациленĕ. Кĕске вăхăтрах Миронов юлташ 6 çĕлĕк, 9 минтер пичĕ, 5 мăшăр алшăш тата 1200 тенкĕлĕх облигаци пухнă.

Эптриялĕнчи туллимар вăтам шкулăн учительницы К. Мадеева юлташ Хĕрлĕ Çара пулăшма кирлĕ çинчен ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса парать. Унпа пĕрлех вăл ПВХО кружокĕн занятисене иртерет.

Ăшă тумтир пухас ĕç Кавалри, Кивĕ Ĕармарти, Чăрш Çырминчи шкулсенче те ăнлăн сарăлса пырать. Паянхи куна ку шкулсенчи учительсем сахал мар ăшă тумтир тата заем облигацийĕсем пухнă.

Аралуçĕнчи туллимар вăтам шкулти ачасем ялсенче çăм пухаççĕ те, кăсхине пуçтарăнса алшăшсем сыхаççĕ. Çавăн пек ĕçлесе, пĕр-ик кăсрах 14 мăшăр алшăш сыхнă.

* * *

ИШЛЕЙ. Октябрĕн 31-мĕш тĕлне районĕпе 2874 тир, 1375 килограмм çăм, 2435 метр пир, 163 мăшăр перчатка, 86 мăшăр чăлха, 421 алшăлли, 28 ăшă кĕпе, 325 çĕлĕк, аялтан тăхăнмалли кĕпе, 10 фуфайка, 82 минтер пичĕ, çăматăсем тата ытти япаласем те пухнă.

Пирĕн районра пухнă чĕрĕ тирсене Шăнкасри (Шупашкар р.) промысла артелĕ тăвать, вăл 250 тир туса пачĕ, çавăн пекех Шупашкарти горпромкомбинат эпир пухнă çăмран 250 мăшăр çăматă йăваласа пачĕ. Калас пулать, вĕсем пирĕн заказсене питĕ вăраха ярса пурнăçа кĕртеççĕ, çавна пула ăшă япаласене кирлĕ çĕре ярса парассине вăхăтра туса пыма çук. Ăшă япаласем туса хатĕрлекен предприятисен хăйсен ĕçне вăйлатас пулать.

Ишлей районĕнче ăшă япаласем пухас ĕçе Кибечкасси ялсоветĕнче лайăх организациленĕ. Унта ăшă тумтирсем пухакан комиссин председателĕ пулса Лыков юлташ ĕçлет. Вăл ялсоветĕпе пĕтĕмпе 113 тир, 3 мулаххай, 55,2 килограмм çăм, 39,8 метр пир тата алшăшсемпе алшăллисем пухăннă. Çавăн пекех ĕçлесе, пĕр-ик кăсрах 14 мăшăр алшăш сыхнă.

* * *

ЧУКЕЕВКА. Ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 1-мĕшĕнче пресс-конференцире Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл çапла каланă:

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Финляндине, вăл Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе тусла отношенисене сыхласа хăварас тет пулсан, Российăна хирĕç вăрçма, халех чарăнмелла тесе асăрхаттарнă. Хэллран: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем килĕшмен пирки Англия Финляндине хирĕç вăрçăпа тухмашкăн чарăнса тăрать тесе Лондонран пĕлтерни мĕнле те пулсан чăнлăхпа сыхăнса тăрать-и, тесе ыйтнă. Доу-Джонс агентстви Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хэлл çапла каланă: Финляндипе правительствине, вăл кăй Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе тусла отношенисене сыхласа хăварас тет пулсассăн, финсен войскисене фронтран халех каялла илсе тухма тата мир тăвасси пирки калаçусем пуçласси çинчен ыйту сӳтсе-явма кирли çинчен асăрхаттарса нота панă, — тенĕ.

Хэлл заявленийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 3-мĕшĕнче пресс-конференцире Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл çапла каланă:

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Финляндине, вăл Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе тусла отношенисене сыхласа хăварас тет пулсан, Российăна хирĕç вăрçма, халех чарăнмелла тесе асăрхаттарнă. Хэллран: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем килĕшмен пирки Англия Финляндине хирĕç вăрçăпа тухмашкăн чарăнса тăрать тесе Лондонран пĕлтерни мĕнле те пулсан чăнлăхпа сыхăнса тăрать-и, тесе ыйтнă. Доу-Джонс агентстви Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хэлл çапла каланă: Финляндипе правительствине, вăл кăй Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе тусла отношенисене сыхласа хăварас тет пулсассăн, финсен войскисене фронтран халех каялла илсе тухма тата мир тăвасси пирки калаçусем пуçласси çинчен ыйту сӳтсе-явма кирли çинчен асăрхаттарса нота панă, — тенĕ.

Франçин Лондонри национальнăй комитетне йышăнни

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бельги, Польша, Чехословаки правительствисем Франçин Лондонри национальнăй комитетне йышăннă тата вĕсем çавна май тивĕçлĕ çырусем ярса илнĕ.

Нимĕçсен Франçири террорĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: заложниксен 50 çынтан тăракан иккĕмĕш ушкăнне Нант хулинче асаплантарса вĕлернĕ. Ку 50 çынна нимĕçсен полковникне Гольца вĕлернĕшĕн тавăратпăр тесе асаплантарса вĕлернĕ. Заложниксен 50 çынтан тăракан малтанхи ушкăнне Бардо хулинче асаплантарса вĕлернĕ пулнă, вĕсене нимĕçсен майорне вĕлернĕшĕн вĕлернĕ.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франçире фашистла террор вăйлансах пырать. Нимĕç генералне Гольца вĕлерекенсене тупас тесе, нимĕç войскисемпе Франçири полици Нант хулинче кашни килех ухтарса тухнă. Нант хулинче пурăнакансене хуларан тухса çӳреме чарнă. Çак ухтарусем нимĕнле усă та паманни нацистсене татах тарăхтарать. Пĕтĕм çĕршывпех талккишпе арестсем туса иртереççĕ. Çав агентствăн корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: фашизма хирĕçле пропаганда тунăшăн Вишире 5 çынна арестленĕ. Вĕсем фашизма хирĕçле пропаганда тума Парижри почтăпа усă курнă. Парижри специальнăй трибунал 14 коммуниста 6 çултан пуçласа 20 çул таран каторгăллă ĕç-леттермелле приговор йышăннă. Айăплаканасенчен пилĕкĕшне тĕрмене хупмалла тунă тата штрафланă. Çавăн пекех Генериетт Экслера арестленни çинчен пĕлтереççĕ. Ана коммунистла депутат пулнă Лютьене пытарса унăн тесе айăпланă.

Франçи халăхĕ Петэн политикине ырламасть

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виши хулинчен çапла пĕлтерет: Петэн, Франçи халăхĕ ун майлă пулманнине кура, хăйне валли хăйĕн вăйĕсемпех массăллă база тума шут тытнă. Вăл хăйĕн майлă тăракан чи паллă 700 çынна ятарласа тунă организацине пĕрлештернĕ. Çак организацин Виши правительствин политикине пĕтĕм Франçи халăхĕ ырланă пек кăтартса тăмалла пулать ĕнтĕ.

Чехипе Моравири массăллă арестсем

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Çапла пĕлтереççĕ: Чехипе Моравии протекторатĕнче массăллă арестсем туса асаплантарса вĕлересси халĕ те чарăнман. Нацистсем чехсен студенчĕсене уйрăмах хаярăн асаплантараççĕ. Юлашки кунсенче 1000 студента яхăн суд тунă. Вĕсене Германие хирĕçле ĕçсем тăваççĕ тесе айăплаççĕ.

Тулăпа кукуруза тухăçлăхĕ чакнă

СТАМБУЛ, октябрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Нацистсен «Кельнише цейтунг» хаçачĕ Италире тулăпа кукуруза тухăçлăхĕ питех те пысăккăн чакнине паллă туса сырать. Официальнăй даннăйсем тăрăх, кăçал Италире тулă мĕнпурĕ те 7.150 пин тонна кăна пулнă, 1938 çулхипе танлаштарсан пĕр миллион тонна, 1939 çулхипе танлаштарсан пĕр миллион тоннăна яхăн каярах. Кукуруза тухăçлăхĕ кăçал татах та сахалтарах пулнă, мĕнпурĕ те 3 миллион тонна кăна пухса кĕртнĕ, вăл пĕлтĕрхинчен 201 пин тонна каярах.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чугунçул çинчи патриотсем

Отечественнăй аслă вăрçă чугунçул транспорчĕ умне пысăк задача хатĕрлĕ. Пирĕн муштавлă çĕршывăн çирĕп чугунçулĕсем тăрăх фашистла ирсĕрсене аркатса тăкмалли материалсем, боеприпассем вĕçĕ-хĕррисĕр куçса тăраççĕ. Кашни поезда, кашни вагона хăйĕн маршручĕпе каймалли пырăна вăхăтра çитерни — тăшмана çапни тата Совет Союзĕн вăйăватне çирĕплетни пулса тăрать.

Пирĕн республикăри чугунçул работникĕсем, кучухнехи вăрçăн ответлăхне шута илсе, хăйсен ĕçĕнче çирĕп те тӳсĕмлĕ тата пултаруллă пулнине кăтартса параççĕ. Двухсотниксен движенийĕ куллен кун ӳссе пынă май, кивĕ нормăсем пăрăлса тухаççĕ, ĕç тухăçлăхĕн пысăк, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ нормисем ӳсеççĕ.

Канашри вагонсем юсакан заводри коммунистсем Федин, Козлов, Григорьев тата ытти юлташсем кашни уйăхрах 2—3 норма тултарса ĕçлеççĕ. Инструментальнăй цехри нумай станокпа ĕçлекен медальеносец Осипов юлташ 3—4 норма, Канашри депора ĕçлекен слесарьсем Золотухин, Чеботарев, Ефимов юлташсем 2—3 норма тултарса пыраççĕ.

Чугунçул çинче ĕçлекен тĕрлĕ профессиллĕ работниксем хушшинче, уйрăмăнах машинистсем, путеецсем тата водокачкăри, электростанцинчи машинистсем, слесарьсемпе токарьсем хушшинче лунинла движени куçран кун сарăлса пырать.

Лунинла движение анлăн çарса пыракансем — Улатăрти депора ĕçлекен коммунистсем Рожков, Уваров, Голованов юлташсем, Канаш деповĕнчи лунинец-машинистсем Сагитов, Каминский, Назаров, Тимофеев тата ытти юлташсем пулса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен паровозĕсене таса тытаççĕ, çапла майпа вĕсем çуса ремонтлас ĕçе тата ăна тунă чухне пулакан простойсен вăхăтне чакарнă. Кунсăр пуçне вĕсем кашни уйăхрах сунтармалли япаласене перекетлесе хăварасçĕ.

Станцисемпе разъездсенче ĕçлекен 28 стрелочник лунинла ĕçлесе пыраççĕ, вĕсем путеецсемпе пĕрле чугунçул çинчи çуралăха ремонт туса тăраççĕ. Янкăлч разъездĕнчи стрелочник Тимофеев юлташ çул çинче ремонтсене пĕтĕмпех хăй вăйĕпе туса пырать. Улатăрти водокачкăра ĕçлекен старший машинист медальеносец Кабанов юлташ мĕнпур агрегатсене хăй пĕччен юсаса тăрать. Çавăнпа та унта пыв парса тăрас тĕлĕшпе пĕр чăрмав та пулмасть.

Чугунçул çинче ĕçлекен патриотсем темиçе профессипе ĕçлессине ăнăçлăн вĕренсе пыраççĕ. Ку енĕпе Алтышево разъездĕнчи кассир, граждан вăрçин участникĕ, чугунçул транспорчĕ çинче 37 çул ĕçленĕ А. Т. Коротин юлташ лайăх пуçару тунă. Вăрçă кунĕсенче вăл билет сутакан кассир пулса ĕçленĕ вăхăтрах весовщик профессине хăйĕн çине илнĕ. Иккĕмĕш профессине ĕçлесе илнĕ 500 тенкĕ укçана Коротин юлташ кашни уйăхрах çĕршыв оборонин фондне парса тăрать.

Хĕллехи сивĕ кунсем сывхарса килеççĕ. Чугунçул çинче ĕçлекен рабочисем хĕллехи вăхăтра йĕркеллĕ ĕçлесси — хĕллене тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илнинчен килнине лайăх пĕлсе тăраççĕ. Чугунçул транспорчĕ кăçалхи çул нихăçанхинчен те организованнăй ĕçлемелле.

Çавна шута илсе Улатăр тата Шупашкар дистанцисенчи путеецсем хĕллене кĕтсе, илме вăхăтра хатĕрленме тытăнчĕç. Чугунçул çине çуса тултаракан юрсене тасатма колхозниксемпе договорсем туса хунă, сывăх кунсенче юсавлă мар çулсене пĕтĕмпех ремонтласа çитереççĕ, щитсене лартса пĕтереççĕ, инструментсене юсаса хатĕрлесçĕ. Улатăр çулĕ çинчи 4, 6 тата 8-мĕш околоткăсем хĕллехи условисенче ĕçлеме пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ. Чугунçул транспортне хĕллене хатĕрлес ĕçре партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем пысăк пулăшу парса тăраççĕ. Чугунçул станцисенче тата ытти çĕртте те пиншер колхозниксем воскресниксем туса ĕçлерĕç.

Хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе Алтышево разъездĕнчи коллектив кăтартуллăн ĕçлесе пычĕ. Разъезд начальникĕ коммунист Фролов юлташ ĕçре хăй лайăх тĕслĕхсем кăтартса пытăсене хавхалантарса пычĕ. Ĕç пĕтернĕ хыççăн, канмалли кунсенче шишсемпе алшăллисем пухăннă. Çавăн пекех Чаканар ялсоветĕнчи «Осоавиахим» колхоз членĕсем пурте тенĕ пекех Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем парас ĕçе хутшăннă.

Ăшă япаласем пухас ĕç уйрăмах Тивĕш ялсоветĕнче начарчĕ. Комисси председателĕ Сорокин юлташ (туллимар вăтам шкулăн директорĕ) тата пуçламăш парторганизацин секретарĕ В. Яртеев халĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă тумтирсем пани мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса паман. Тивĕш ялсоветĕнче ăшă япаласем пухас ĕçе вăйлатма кирлине парти райкомĕ уйрăмах асăрхаттарсан кăна Сорокинпа Яргеев юлташсем çак ĕçе çине тăрса туса пыма тытăнчĕç. Халĕ ăшă япаласем пухас ĕç унта та лайăхланчĕ.

Ф. САЗОНОВ.
ВКП(б) райком секретарĕ.

* * *

КУКЕÇ. Иккасси ялсоветне кĕрекен колхозсен членĕсем тăван çĕршыв оборонин фондне тĕштырăсем, заем облигацийĕсем хывăççĕ.

Çак куншенче ялсоветри колхозниксем Хĕрлĕ Çар валли пĕр тонна çĕрулми, 900 килограмм купăста, 175 килограмм аш-какай, 100 çăмарта, 40 литр сĕт, 4 килограмм çу пачĕç.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 300 мăшăр ăшă алшăш, 30 мăшăр çăматă, 300 мăшăр çăм чăлха, 120 чĕрĕ тир, 35 мулахай, 20 çăм кĕпе, 10 кĕрĕк тата ытти-сене те пухса, районри склада леçсе панă.

И. ВАСИЛЬЕВ.

* * *

Шупашкар хулинчи пристаньре ĕçлекен рабочисемпе служащисем Хĕрлĕ Çар боецĕсене Октябрь уявĕ ячĕпе парнесем илсе пама пурĕ 1.500 тенкĕ укçа пухрĕç.

Уйрăм рабочисемпе служащисем парнесем илмешкĕн 30—50-шар тенкĕ пачĕç. Сăмахран, таварсем йышăннă çĕртте ĕçлекен Иванов 50 тенкĕ, перевоз заведующийĕ Толмачев—50 тенкĕ, диспетчер Михайлова—30 тенкĕ, партин пуçламăш организацин секретарĕ Игумнов—30 тенкĕ, диспетчер Родинов—30 тенкĕ, бухгалтер Красильников—25 тенкĕ, караванщик Ищин—20 тенкĕ пачĕç.

Пухăннă укçапа тĕрлĕ япаласем илсе, вĕсене Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли фронта ячĕç.

Хĕллехи спорт умĕн

КАЛИНИНО. Комсомолăн Сăкăтри пуçламăш организацийĕ хĕллехи спорта хатĕрленме тытăнчĕ. Комсомолецсемпе комсомолкăсем йĕлтĕрсем тума тытăнчĕç. Халĕ 13 комсомолецран 4 комсомолецăн çеç йĕлтĕр çуй. Çавăнпа пĕрлех винтовка макечĕсем, пулемет тата танк макечĕсем, штык вĕçĕн çапăçма вĕренмелли чучелсем хатĕрлес тĕллеве пуçларĕç. Кашни комсомолеца винтовка тата пулемет макечĕсем тума задани панă. 4 комсомолеца пĕр танк макечĕ тума задани панă. Халĕ 11 винтовка макечĕпе 2 пулемет макечĕ хатĕр.

Кунпа пĕрлех комсомолецсемпе комсомолкăсем оборона значокĕсен нормисене параççĕ. 13 комсомолец пурте ПВХО значокĕн пĕрремĕш ступеньлĕ нормисене парса пĕтернĕ. Краснов, Евсеев, Трофимов комсомолецсем иккĕртăватшар значокăн нормисем парса значок илнĕ.

МАТВЕЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —